# Сирĕн ятăрсем асрах
# (Манăçа тухми кунсем)

*Вăрçă вăхăтĕнче чĕмсĕр чикĕ тăвакансене халалланă музыкăпа литература композицийĕн сценарийĕ (хатĕрлекенĕ:чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Васильева Т.М.)*

## I курăну

*Сцена хыçĕнчен хурлă юрă юрлани илтĕнет. Куна тырă выракан хĕрсем юрлаççĕ.*

Тытрĕç мана, касса хучĕç,
Çапă купи туса хучĕç.
Шăпи çавнашкал,
Турри телейне паман.

***1 Ертсе пыракан:*** **Каччисем инçетре, ялта пĕр яш та çук... Хăшĕ ашшĕ вилни çинчен хыпар илнĕ, тепри пиччĕшĕ çухални çинчен, Ольгăн тусĕ — аманнă, Укахвин — çухалнă. Хĕрсем юрлаççĕ...**

***2 Ертсе пыракан:*** **Юрри тавралăх хурлăхĕпе кĕвĕллĕ. Тавралăх та тă-лăха юлнă: вăйпитти арçын аллисĕр, машинсăр, вăйлă лашасемсĕр, пĕрлĕхлĕ юратусăр... Хĕрсем юрлаççĕ. Тӳрри-варлисем вăрçăра. Хушса юрламаллине улăх, вăрман, сăрт, шыв ярса илсе малалла тăсать.**

*Хул пуççисем çине çурласем çакса янă виçĕ хĕр сцена çине тухаççĕ. Кусем виçĕ хĕр-тантăш: Укахви, Хĕветли, Ольга.*

***Хĕветли:*** Питĕ аван тырра вăхăтра вырса пĕтертĕмĕр.

***Укахви*:** Халĕ ĕнтĕ çĕрĕпе чăлăм куç хупмасăр авăн çапма та пулать, колхозăн çак кунсенчех сахалтан та пĕр вунă тонна çĕнĕ тырă леçмелле.

***Ольга:*** Апла кăштах канса илер те, авăн çапма тухар.

*Вĕсем патне колхоз председателĕ Тарье пырать.*

***Колхоз председателĕ***: Хĕрсем, кăштах тăхтăр-ха, итлĕр, хыпарĕ ман савăнăçлиех мар та. Колхоза хушу килчĕ. Ыранах виçĕ çынна окоп чавнă çĕре ямалла. Кама ямалла-ха. Эсир ман сăмахсене йывăра ан илĕр те, колхоз правлени ларăвĕ сире яма йышăнчĕ.

***Хĕрсем:*** Çĕр-шыв хушать пулсан...

***Колхоз председателĕ***: Килĕрсене кайса ыран çула тухма хатĕрленĕрех ĕнтĕ эсир.

*Пурте сцена çинчен тухса каяççĕ.*

## II курăну

*Ял пӳрчĕ. Пӳртре Укахви, амăшĕ тата йăмăкĕ.*

***Укахви*:** Анне кутамккана хальтерех пуçтарар пуль. Кая юлсан хĕрсенчен аван мар. Хама кĕттерме хăнăхман эпĕ.

***Амăшĕ:*** Кутамккине ăна хатĕрлĕпĕр-ха, Укахви. Хăвна шел, питĕ çамрăк вĕт-ха эсĕ, йывăр ĕçпех хуçăлатăн.

***Укахви*:** Ан кулян, анне, эп пĕччен мар, хамăр ял хĕрĕсемпе пĕрле каятăп. *(Çипуçне пуçтарма пуçлать.)*

***Укахви*:** Улăштарса тăхăнма тепĕр мăшăр çăпатапа тăла илес пуль. *(Çăпатапа тăла йătса тухса хурать.)*

***Амăшĕ:*** Пĕр тăвата мăшăр çăпата, икĕ мăшăр хура çăм тăла чикетĕн пуль. Никам та пĕлмест, тахçан таврăнатăр тата.Ĕçре çăпата час арканать. Çăкăрне те ытларах ил, выçă хырăмпа çынпа тан ĕçлеймĕн. *(Çăпатасем, тăла хатĕрлесепарать, çăкăрне сĕтел çине килсе хурать.)*

***Укахви*:** Юрать, анне. *(Çăкăрне тутăрпа чĕркесе кутамккана чикет.)* Ларар çула тухиччен. *(Амăшĕпе йăмăкĕ те юнашар пырса лараççĕ.)* Çитĕ, тапранар. *(Кутамккине çĕклет.Тухса каяççĕ.)*

## III курăну

***1 Ертсе пыракан:*** **Вĕсем паян хăйсен хушшинчен виççĕшне инçе çула ăсатаççĕ: Каякансем – виçĕ хĕр-тантăш: Укахви, Хĕветли, Ольга... Вĕсем окоп чавма тухса каяççĕ. Каякан хĕрсенчен чи асли те – Хĕветли – вун саккăртан çеç иртнĕ. Хăш çĕре яраççĕ вĕсене? Мĕн вăхăт пурăнмалла унта вĕсен? Ырлăх кĕтет-и унта, хурлăх-и?**

***2 Ертсе пыракан:*** **Куна вĕсем ыйтмаççĕ, хăйсемех пĕлеççĕ кукка патне мар иккенне. Çĕр-шыва кирлĕ пулсан – каймалла, усăллă пултăр çеç, часрах тăшмана çĕнтерме пулăштăр çеç...**

*Хĕрсем карталанса тăнă. Çийĕнчи тумтирĕсем камăн мĕнле: пĕве илем кӳме мар тăхăннă, шукăльшăн мар. Кунта тумтирĕн пĕр пĕлтерĕшĕ çеç – ӳт ан курăнтăр, питти лултăр.Кăнтăрла иртсен пĕтĕм ял укăлча тулашне тухрĕ. Ял тулашĕнче сывпуллашма пуçларĕç.*

***Колхоз председателĕ:*** Тăвансем, ял халăхĕ, çĕр-шыв хăрушлăхра! Нимĕç фашисчĕсем пирĕн çĕр çине шалтан шала кĕрсе пыраççĕ. Вĕсене чармаллах. Пирĕн те хатĕр пулмалла вĕсене тытса чарма. Паян эпир хамăр колхозран пĕрремĕш ушкăна окопсем чавма ăсататпăр. Нимĕн тумалли те çук, вăрçă пырать, вăйпитти çын сахалланса юлчĕ хуçалăхра, ирĕксĕрех хĕрсене яма тивет унта.

***1 Ял çынни:*** Çулăр ăнăçлă пултăр ĕнтĕ.

***2 Ял çынни:*** Чипер кайса чипер таврăнмалла пултăр.

*Амăшĕсен ăс вĕрентессипех:*

-Ну, тӳрĕ çӳрĕр, ачасем. Аслисене пăхăнăр, вĕсен ирĕкĕнчен ан тухăр... Ырă ятпа таврăнăр...

*Укахви амăшĕ чăтаймарĕ, нăшăклатса илчĕ те саппун кĕтессине çĕклесе тутине хупларĕ, унтан унăн куççуль витĕр каланă сăмахĕ илтĕнчĕ:*

***Укахви амăшĕ:*** Ах, çав çĕр çăтманĕ Гитлере... Ма йытă çимест-ши пуçне! Ара, пĕве çитмен хĕрсене тĕнче тăрăх нуша курса çӳремелле килчĕ-иç...

***Хĕветли амăшĕ:*** Вăл çеç куç тулличчĕ. Ашшĕ вилчĕ, пиччĕшĕнчен çыру та килмест. Ăна пăхса çеç йăпанса пурăнаттăм.

***Ольга амăшĕ:*** Эс чăт-ха, кин, çула каякан çынна хурлантарса ямаççĕ ăна. Хăйсенне хăйсем пĕлсе çӳреччĕр ĕнтĕ. Йывăр пулсан та – чăтмалла.

***Колхоз председателĕ:*** Хĕрĕсем вĕсем маттур! Ниçта та аптрамаççĕ. Лере те колхозра ĕçленĕ пек ĕçлĕр.

*Хĕрсем амăшĕсене лăплантараççĕ.*

***Укахви:*** Пирĕншĕн ан кулянăр. Çын чăтнине чăтăпăр. Этем тума пултарнă ĕçех параççĕ пуль-ха.

*Çакна каланă хыççăн хĕрсем часрах хускалса кайма васкаççĕ. Уй хапхине çитсен вĕсем çаврăнса тăрса алă сулаççĕ, вара ерипен куçран çухалаççĕ.*

## IV курăну

***1 Ертсе пыракан:*** **Канаша çитнĕ çĕре Укахви, Хĕветли пек хĕрсем пĕр виç çĕр çынна яхăн пухăнчĕç. Е. хули çывăхне илсе кайрĕç вĕсене... Çитсенех бригадăн-бригадăн уйăрчĕç. Кашни бригадăра – вăтăршар хĕр. Бригадирĕсем те хăйсем хушшинченех. Блиндажсем, танксене чармалли окопсем чавтарчĕç вĕсене – танк пынă çĕртех унта кĕрсе кайса каялла тухмалла мар шăтăксем. Кун пек окопа тăваттăн-пиллĕкĕн иквиçшер кун чавма тиветчĕ. Йывăрччĕ ĕç. Çапах та çĕр шăниччен, сивĕтиччен йывăрлăхĕ ытлах сисĕнместчĕ. Кайран вăйсем те иксĕлчĕç пулмалла хĕрсен – тек-текех халтан кайнине туя пуçларĕç. Чи йывăрри вара раштав, кăрлач сиввисем çитсен пуçланчĕ.**

***2 Ертсе пыракан:*** **Пуринчен ытла çамрăк шăм-шаксене сивĕ хуçрĕ. Çил тумтир витĕр, ӳт-тир витĕр кастарса шăмăсене çитсе кăтăклать, сулăнтарса ярать; çĕр çумĕпе, вирт кайнă пек, сăлпăран кустарать. Пите кăшт çиле хирĕç тытсанах тăм илсе ярать, çул çинче те хăяккăн çеç, минутсерен çил енне çурăмпа çаврăна-çаврăна утатăн. Алла алса ăшĕнчех чăмăртаса тытатăн та – алса пӳрнескисем пушăллах сулланса пыраççĕ. Тăм илтерсе янă аллисене хĕрсем сивĕ шыва чикеççĕ те, çара алăранах пăр „перчетки” шăнкăлт хывăнса ӳкет. Кунсерен лум-кĕреçе йывăрланса пырать алăра, хĕрсем чирлеççĕ, вĕсем вырăнне урăххисем килеççĕ...**

*Хĕл кунĕ. Окоп чавакансем канма ларнă. Кăвайт çунать. 4-5 çын кăвайт умĕнче ăшăнаççĕ. Пĕри кăвайт çине вутă пăрахать. Теприн аллинче патак.Вăл унпа кĕл ăшĕнчен çĕр улми кăларать.*

***1 Хĕрарăм:*** Эх, сивĕ те паян çанталăкĕ.Витĕрех шăнтăм.Кăшт ăшăнам-ха.

***2 Хĕрарăм:*** Çипуçĕ те питех мар çав. Мĕн пуррипе килнĕ ĕнтĕ.

***3 Хĕрарăм:*** Вĕри шыв сыпăр, кĕлетке-çурăм ăшăнтăр. (Хурантан шыв ăсса парать.) Пĕрер çĕр улми илсе апатчен хырăмусене улталăр.

***Ватă арçын:*** Лум ерçрĕ-и унта? *(Сцена хыçнелле кăшкăрать.)* Бригадипе те пĕр лум кăна. Çĕрĕ хытах шăнса ларнă. Çавăнпа ĕç йывăррăн шăвать.

*Укахпа Хĕветли çак бригадăна лекнĕ. Вĕсем те кăвайт патне пыраççĕ.Сцена умнерех тухаççĕ.Укахви пĕр чарăнми аллине сăтăрать.*

***Хĕветли:***Мĕн пулчĕ, Укахви? Эсĕ ху та ху мар паян.

***Укахви*:**Темскер хăрах хул – сулахаййи – чавса кукрашки тĕлĕнчен ыратакан пулса кайрĕ. Сурать те сурать.

***Хĕветли:***Укахви, сан яла таврăнмалла мар-и? Ыратакан аллупах канма пĕлмесĕр ĕçлетĕн. Вилетĕн эс капла, Укахви... Ĕçлесех вилетĕн!

***Укахви*:** Пурне те йывăр халь. Мана кăна мар, эпĕ чăтма хăнăхнă. Тата хальхи вăхăтра – нимĕç фашисчĕсемпе хаяр вăрçă пынă тапхăрта, вăрçă хирĕнчи тантăшсем-салтаксем чăлăм куç хупмасăр тăхлан çумăр айĕнче выртнă чух – ăшă пӳртре çемçе вырăн çинче çывăрни те çут тĕнче умĕнче тем айăп тунăн туйăнтарса тăрать.

***Укахви*:** Юрĕ, çитĕ кун çинчен калаçса, атя кăштах ăшăнар та ĕç вырăнне таврăнар.

Пĕрх *хĕрарăм уксахласа кĕрет, хăй йĕрет.Унăн çăпати арканса кайнă.*

***Хĕрарăм:*** Пĕтрĕмех, тăлапа кăна тăрса юлтăм. Улăштармалăх илсе килме килте çăпати те пулмарĕ тата. Мĕн тумаллах халь.

***Укахви*:** Ытлах ан кулян-ха, инке. Манăн пур çăпата, вăйпах парса ячĕç килтен. Сана юрама кирлĕ. Баракра кутамккара, каçпа çывăрма таврăнсан парăп.

***Бригадир:*** Тăвансем, каç пуличчен нормăсене пурнăçлар пуль. Йывăр пулсан та малалла чавар. Тискер тăшман ан хапсăнтăр пирĕн çĕре.

***1 Ертсе пыракан:*** **Укахви йăрă та чĕрĕ, хаваслă та калаçма, шў́т тума юратакан хĕр ачаччĕ. Халĕ вăл – вăрçă пуçланнăранпа, ахаль чух хăш-пĕр арçын та çитсе курас çук çĕр-тĕлсенче пулнă хыççăн, хăш-пĕр вăйпитти арçын та хуçăлса ў́кмелле ĕçсенче пулса курнă хыççăн – улшăнса кайрĕ: ярăнса утнă утти те, çивĕч чĕлхи те улшăнчĕ, янкăс сасси салху çемме куçрĕ, кăмăлĕпе пусăрăнчĕ, сăнне-питне хура-шур тĕсĕ, ĕшенчĕк сĕм çапрĕ. Вăл ĕнтĕ халь вун çиччĕре.**
***2 Ертсе пыракан:*** **Çулталăка яхăн окоп чаврĕç вĕсем, ялти виçĕ хĕр: Укахви, Ольга, Хĕветли, çулталăкран çеç яла таврăнчĕç... Мĕн-мĕн курман пулĕ çавă вун пĕр уйăхра – шартлама сивĕре шăн çĕре лумсемпе ватса чавнă чух, сивĕ бараксенче çĕр каçнă чух.**
***1 Ертсе пыракан:*** Мĕн тăвас-ха, вăхăчĕ çапла килчĕ пулсан? Эй, Тăван çĕр-шыв. Сана йывăр килсен, сана тăшманран сыхлама ывăлу-хĕрӳсем хăйсен пурнăçне те шеллемен. Эй, çут тĕнче. Итлесемччĕ пире. Ан пулччăр Çĕр çинче вăрçă-харçăсем урăх нихăçан та.